28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
26
ВЫРСАРНИКУН
165(6916) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

1945 çулта Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче кĕрхи çĕртме сухи тăвасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çакна палăртаççĕ: 1946 çулта вăйлă тырпул туса илмелли чи тăтăклă мероприятисенчен пĕрийĕ кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра тата пахалăхлăн туса иртерни пулса тăрать.

Вăрнар, Калинино, Красноармейски, Çĕрпӳ районĕсенчи колхозсем, 1944 çулта кĕрхи çĕртме сухине ытти районсенчи колхозсенчен лайăхрах туса иртернĕскерсем, 1945 çулта çуракине чылай кĕскерех вăхăтра иртерме тата ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай ўстерме пултарчĕç. Анчах республикăри хăшпĕр районсенче 1944 çулта кĕрхи çĕртме сухине тивĕçлипе хаклаймарĕç, кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана тултараймарĕç, çавăнпа вара вĕсен 1945 çулхи çураки вăхăтĕнче пысăк чăрмавсем пулчĕç, тырпул тухăçĕ те вĕсен пĕчĕкрех пулчĕ. 1946 çулхи çуракине иртерме лайăхрах условисем туса парас тесе тата вăйлă тырпул туса илес тесе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС директорĕсене тата колхоз председателĕсене çапла тума хушас:

а) 1945 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа колхозсенче кĕрхи çĕртме сухи тума тытăнмалла. Кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлеме яланлăхах кирлĕ таран лашасем уйăрса памалла, ĕçе черетпе туса пымалла мар.

Кăçал вырса илнĕ пур участоксенче те малтанласа хăмăла сухаласа пухмалла. Чи малтанах ку ĕçе 1946 çулта вăрлăхлăх çурхи культурăсем акмалли участоксем çинче туса иртермелле;

б) кĕрхи çĕртме сухине тракторсемпе сухаланă чухне сахалтан та 18—20 сантиметр тарăнĕш, чĕрĕ туртăм вăйĕпе сухаланă чухне 14—16 сантиметр тарăнĕш сухаламалла. Кĕрхи çĕртме сухин пахалăхне çирĕп тĕрĕслесе пымалла, ку ĕçе тума райзо тата МТС агрономĕсене, колхозсенчи пахалăх инспекторĕсене явăстарас пулать. Çиелтен тунă ĕçе сĕнĕрен ĕçкунĕсем çырса памасăрах тепĕр хут тутармалла. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте МТС-сенчи пур предплужниксемпе те усă курмалла, вĕсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕслесе пырас пулать.

Кĕрхе çĕртме сухи тăвас ĕçе çăмăллатас тесе, сухаламалли пур участоксене те кивĕ улăмран тата çумкурăкĕнчен тасатса тухмалла.

Районсем тăрăх çĕртме сухи тумалли пилĕккунлăх графика çирĕплетес. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене икĕ кун хушшинче пилĕккунлăх заданисене колхозсемпе трактор бригадисене çитерме, колхозсемпе трактор бригадисенче вара уйрăм колхозниксемпе трактористсем патне çитерме хушас.

Райисполком председателĕсемпе ВКП(б) райком секретарĕсене, колхоз правленийĕсемпе пĕрле, кашни колхозрах кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлемелли лашасемпе вăкăрсене палăртса хума хушас, вĕсене халех çав ĕçе тăратмалла та кĕрхи çĕртме сухине туса пĕтермесĕр те урăх ĕçе куçарма юрамасть.

3. МТС директорĕсене комбайнпа тырă пухса кĕнĕ çĕрте, кĕрхи тырăсене акнă çĕрте тата авăн çапнă çĕрте ĕçлемен пур тракторсене те халех кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕре яма хушас.

Хăшпĕр МТС-сенче юсавсăр тракторсем чылай пулнине шута илсе, МТС директорĕсене çавăн пек тракторсене халех юсаса вĕсемпе кĕрхи çĕртме сухи тунă çĕрге усă курма хушас.

4. ВКП(б) райком секретарĕсене, райисполком председателĕсене тата МТС директорĕсене уйрăмах тракторсемпе çĕрлехи сменăра туллин усă курасси çине тимлĕн пăхма хушас. Çавăн пекех кăнтăрла комбайнпа тырă пухнă çĕрте, е кĕрхи тырăсем акнă çĕрте ĕçлекен тракторсене те çĕрле кĕрхи çĕртме тума ямалла.

Сезонра кашни сменăра тракторсемпе çакăн чухлĕ кĕрхи çĕртме сухи тумалли нормăна çирĕплетес:

а) СХТЗ тракторпа—60 гектар;
б) СТЗ-НАТИ тракторпа—100 гектар;
в) ХТЗ-Т2Г тракторпа—90 гектар;
г) ЧТЗ С-60 тракторпа—140 гектар;
д) У-2 тракторпа—40 гектар.

Трактористсем сезонри нормăна октябрĕн 10-мĕшĕччен тултарсан, МТС трактористчĕсене 60 ĕçкунĕ чухлĕ преми хушса памалла, совхозсенчи трактористсене вара иртнĕ уйăхра илнĕ ĕçукçи чухлĕ укçан премии памалла.

Сезонри нормăна иртересе тултарнăшăн нормăран иртересе сухаланă кашни гектаршăн МТС трактористчĕсене ĕç кунĕсем 1,5 хут ўстерсе çырса памалла, совхоз трактористчĕсене вара расценкăсене 1,5 хут ўстерсе тўлемелле.

6. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте кашни ĕç лашипе 10 гектар, ĕç вăкăрĕпе—3 гектар сухаламалли нормăна çирĕплетес. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене кашни колхоз тăрăх лашапа тата вăкăрпа суха тумалли сезонри нормăсене çирĕплетсе пама хушас.

Колхозсене кĕрхи çĕртме сухи тумалли сезонри нормăна графикра кăтартнă сроксенче туса пĕтернĕ колхозниксене 10 ĕçкунĕ чухлĕ премии тата сезонри нормăна иртерсе тултарнăшăн нормăран иртерсе сухаланă кашни гектаршăн ĕçкунĕсем 2 хут ўстерсе çырса пама сĕнес.

7. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ мĕнпур совет тата парти организацийĕсене кĕрхи çĕртме сухи тумалли плана вăхăтра тултарассишĕн тата иртерсе тултарассишĕн колхозсенче, трактор бригадисенче, колхозсемпе трактор бригадисенче вара уйрăм колхозниксемпе трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма кирлине палăртаççĕ.

Чăваш АССР Совнарком Председателĕ
А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ
И. ЧАРЫКОВ.

В. И. ЛЕНИН МУЗЕЙĔН ЛЕНИНГРАДРИ ФИЛИАЛĔНЧИ ЧИ ПАХА ЯПАЛА

В. И. Ленин музейĕн Ленинградри филиалне уçма хатĕрленнĕ май, историллĕ броневике вырнаçтарса лартмалли гранит постамента юсама тытăннă. 1917 çулхи апрель уйăхĕнче Владимир Ильич Ленин, Финлянди вокзалĕ патĕнчи площадьре çав броневик çине тăрса, хăйĕн чаплă сăмахне каланă.

Çав броневике Осоавиахимăн Сосновкăри лагерĕнче 1939 çулта тупнă пулнă, ăна, историллĕ чи паха япала вырăнне хурса, В. И. Ленин музейĕн Ленинградри филиалне панă.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче постамент çинчен илнĕ броневике пĕр çирĕп подвала вырнаçтарса хурса усранă. Çак кунсенче музей сотрудникĕсем броневике подвалтан Мрамор дворецĕн картинне туртăрса кăларнă. Халĕ кунта броневике сăрласа йĕркелеççĕ. (ТАСС).

ХУДОЖЕСТВО АКАДЕМИЙĔН МУЗЕЙНЕ ЮСАНИ

Ленинградра Пĕтĕм Российăри художество Академийĕ çумĕнчи музейăн античнăй отделне юсаса çитернĕ. Музей çывăхри кунсенчех уçăлмалла. Кунта античнăй искусство произведенийĕсенчен ўкерсе илнĕ скульптура япалисене нумай пухнă.

Гипсран тунă япаласенчен нумайĕшне XVIII-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнче тата XIX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче тўрех оригиналсенчен ўкерсе илнĕ. Кунта чаплă Эгина фронтонĕсенчен, Пергама фризĕсенчен тата Парфенонăн мрамор скульптурисенчен ўкерсе илнĕ япаласем тата ыттисем те пур.

Скульптура музейĕн уйрăм пайне вырăс скульптурин фончĕ йышăнать. Кунта XIX-мĕш ĕмĕрĕн пирвайхи çуррин пуçласа И. Е. Репин ячĕпе тăракан живопись, архитектура тата скульптура институчĕн студенчĕсем тунă ĕçсене çити академи ученикĕсен чи лайăх ĕçĕсене пухнă.

Музейăн архитектура отделĕ те уçăлать. XVIII-мĕш тата XIX-мĕш ĕмĕрсенчи вырăс зодчествин проекчĕсем—Старов, Казаков, Кваренга, Камерон, Воронихин, Захаров, Росси тата ытти аслă архитекторсен проекчĕсем пур.

Музейра çавăн пекех академи ĕçленĕ пĕтĕм вăхăтри архитектура проекчĕсем, академик ятне илме иртернĕ конкурссене хутшăнса тупăшкерсем, упранаççĕ. Кучухнехи архитектура тĕлĕшне те нумай материалсем пухнă. (ТАСС).

КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔСЕНЕ ВĔРЕНТНИ

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче колхоз председателĕсене вĕрентнин итогĕсене тунă. Кăçал хĕлле пĕр уйăхлăх курсенче колхоз председателĕсем 88.000 çынна яхăн вĕренсе тухнă, вĕсенчен нумайĕшĕ çав ĕçе çĕнĕрен тытăннă çынсем. 1943—1944 çулсенчи хĕлре пĕр уйăхлăх курссенче 92.000 çын вĕренсе тухнă. Çапла вара икĕ çул хушшинче çĕршыври ялхуçалăх артелĕсен председателĕсен 80 процентне яхăн курссенче вĕрентсе кăларнă.

Курссене пуринчен ытла облаçсен, крайсен, республикăсен тата пысăк район центрĕсен хулисенче ялхуçалăх институчĕсемпе техникумĕсем тата наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем çумĕнче организациленĕ. Курсра вĕрентекенсем хушшинче çĕрĕç органĕсен специалисчĕсем, педагогсемпе наука сотрудникĕсем пулнă.

Курссен вĕренў программисенче кашни облаçăн, крайăн тата республикăн ялхуçалăх уйрăмлăхĕсене шута илнĕ Краснодар крайĕнче, Куйбышевпа Киров облаçĕсенче вĕренў вăхăтĕнче малта пыракан колхозсен çитĕнĕвĕсене кăтартса паракан выставкăсем тунă, чылай облаçсенче вĕренў кабинечĕсем организациленĕ.

Курсенче колхоз председателĕсем, ферма заведующийĕсемпе бригадирсем докладсем туса панă. Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх та лекцисем пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Комбайнсемпе, жнейкăсемпе туллин усă курар, пĕр чарăнмасăр авăн çапар, государствăна тырă хăвăртрах леçсе парар, çапла вара Тăван çĕршывăн хăватне ўстерер

Кулленхи нормăна тултарайман çын çук

ИШЛЕЙ. Чаканар ял Советĕнчи «Ырашпулăх» колхозра тырă вырма тухсанах уйрăм сдельщинăпа ĕçлеме тытăннă. Тырра пĕчĕк ушкăнпа—3—5 çын тата уйрăмăн пĕрер çын выраççĕ. Кашнинех уйрăм участоксем виççе панă. Малта пыракан бригада валли Хĕрлĕ Ялав, звеносем тата уйрăм çынсем валли флажоксем тунă. Çапла майпа ку колхозра ĕç тухăçлăхĕ кулленех ўссе пычĕ. Х. Никифорова колхозница çавапа кулленех 0,48—0,50 гектар çулса пухать. Вăл ĕçе ирех тухать, ĕçрен тĕттĕм пулсан кăна таврăнать,

Никифорова примерĕпе В. Антонова, М. Акаева, А. Данилова колхозницăсем, çурлапа куллен 0,35—0,40 гектар вырса, нормăна 300 процент тултараççĕ. Ку колхозра хире тухакансенчен кулленхи нормăна тултарманни пĕр çын та çук. Бригадирсем И. Быковпа П. Васильев, Отечественнăй вăрçă инвалидĕсем, кашни кун вырнă участоксене виççе пыраççĕ, ĕçкунĕсене те çийĕнчех çырса пырса, колхозниксене каласа кăтартаççĕ.

«Ырашпулăх» колхоз 108 гектар ыраша план тăрăх 7 кунта вырса пĕтерме пăхнă пулсан, 6 кунта вырса пĕтернĕ. Халĕ çуртыррисене çурри ытла вырнă. Çуртыррисем вырнă çĕрте те ĕç тухăçлăхĕ пысăк.

Колхозра пĕр вăхăтрах уйран кĕлте турттараççĕ, машинăпа авăн çапаççĕ. Государствăна тырă памалли графика тултарса пыраççĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Графика иртерсе тултараççĕ

ЕЛЧĔК, августăн 25-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас ĕç районра пысăк хастарлăхпа пырать. Паянхи куна районри колхозсем 16.759 гектар вырса пухнă, вăл шутран 3.600 гектарне машинăпа вырнă. 3.106 гектар çинчи тырра çапнă.

Малта пыракан колхозсем государствăна тырă памалли графика ытлашшипех тултараççĕ. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз августăн 25-мĕшĕ тĕлне 83 центнер парас вырăнне 180 центнер, Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз 200 центнер вырăнне 250 центнер, «Хунав» колхоз 164 центнер вырăнне 320 центнер, «Марс» колхоз 306 центнер вырăнне 338 центнер, «Осоавиахим» колхоз 138 центнер вырăнне 246 центнер леçнĕ.

«Осоавиахим» колхозра транспорт бригадин бригадирĕ пулса Пчелов юлташ ĕçлет. Бригада лашасемсĕр пуçне 18 вăкăрпа тырă турттарать. Колхоз паян пур тĕрлĕ тĕштырăсене те вырса пĕтерет. Колхозра тырпул пухса кĕртес ĕçре стахановла ĕçлекенсем нумай. А. Львова, К. Карянкина, М. Ястребова машинăпа вырнă тырра çыхса нормăна кашни кунах 200-шер процент ытла тултараççĕ.

Анчах та государствăна тырă парас ĕçре «Коммунист», «Авангард», «Красные Темяши» колхозсем çаплах юлса пыраççĕ. Кашни колхозăнах малтисемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

А. ЧЕРНОВ.

Икĕ колхозри ĕç дисциплини

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. «Чăваш Коммуни» тата «Победа» колхозсем иккĕшĕ те Хуршавăш ял Советне кĕреççĕ. Çак колхозсен çĕрĕ те, ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ те тата ытти условисем те пĕр пекех. Анчах та вĕсем хушшинче пысăк уйрăмлăх пур. «Правда» колхоз хуçалăхĕ çулран çул вăйланса пырать. Колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем 4, вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарнă. Çĕнĕрен пысăк клуб лартнă. 1944-мĕш çулта колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 1,4 килограмм тĕштырă валеçнĕ. «Чăваш Коммуни» колхозра вара ĕç пачах урăхла. Выльăх-чĕрлĕх витисен çийĕсем шăтса пĕтнĕ, вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарман. Кунта вăйлă тырпулшăн та тивĕçлипе кĕрешмеççĕ. 1944 çулта гектартан вăтам шутпа 6,3 центнер çеç тĕштырă пуçтарса илнĕ.

Колхоз хуçалăхĕ тĕрекленсе пырасси, колхозниксен пурнăçĕ кунран кун лайăхланасси пĕтĕмĕшпех колхозри ĕç дисциплининчен килет. Çакна «Победа» колхоз председателĕ Журавлева юлташ аван ăнланса илнĕ. Вăл колхозри ĕç дисциплинине хурçă пек çирĕп тăвасшăн пĕтĕм вăйне хурать. Малтанах колхозра массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелесе янă: колхозниксене ялхуçалăх артель уставне тĕплĕн ăнлантарса панă, час-часах докладсем, каласусем иртернĕ. Ĕçе сўрĕккĕн хутшăнакансем çинчен колхоз правленийĕн ларăвĕсенче сўтсе-явнă. Çапла ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе колхоз правленийĕ ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине пула, колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ тăтăшах ўссе пынă. 1944 çулта ĕçкунĕсен минимумне тултараймасни пĕр колхозник те пулман. Колхозниксемпе колхозницăсем кăçал та колхоз ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Колхозница А. Железнова кăçал 216 ĕçкунĕ, В. Альдяков, Е. Вашуркин, М. Егоров, А. Васькина, А. Семенова, кашниех 130—205 ĕçкунĕ таран тунă. Вĕсен примерĕпе ытти колхозниксемпе колхозницăсем те колхозра хастарлăн ĕçлеççĕ. Халĕ колхозра тырпул пухса кĕртес ĕçсем пыраççĕ. Уйхирти ĕçсене хутшăнман пĕр колхозник та, пĕр колхозница та çук. Пурте кулленхи нормăна тултарса пыраççĕ. Кунта пĕр сăлтавсăр ĕçе тухманнине, ĕç нормине тултарайманнине колхозниксемпе колхозницăсем пысăк айăп вырăнне шутлаççĕ.

«Чăваш Коммуни» колхозра ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн кĕрешмеççĕ. Колхоз председателĕ Давыдов юлташ ку ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса ларать. Колхозра массăллă-политикăллă ĕçе ситлĕксĕр туса пыраççĕ. Кунта агитаторсем пулса кам ĕçленине те пĕлме çук. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче докладсем, каласусем 1945 çулта пĕр хут та иртермен. Стена хаçачĕсем, «Боевой листоксем» тухмаççĕ. Çавна пула та колхозра ĕç дисциплини питĕ начар. 1944 çулта ĕçкунĕсен минимумне пĕр сăлтавсăрах 17 колхозник тултарман. Çапах та колхоз правленийĕ вĕсене ответ тыттарас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Кăçал та ĕçе тухман колхозниксем çинчен правлени ларăвĕсенче пĕрре те сўтсе-явман. Колхозри хурçă пек çирĕп дисциплинăшăн, ялхуçалăх артель уставне тĕрĕс пурнăçласа пырассишĕн тăрăшман пирки колхозниксен 68 проценчĕ ĕçе питĕ сўрĕк хутшăнать. А. Абрамова, М. Миронова, Ф. Воробьева, А Афанасьева, М. Петрова, Ф. Иванова тата ытти хăшпĕр колхозницăсем ĕçе сайра-хутра çеç тухаççĕ. Вĕсем çур çул хушшинче те 4—13 ĕçкунĕ çеç тунă. Колхозра халĕ тырă вырма пуçланă. Анчах та ыраш вырнă çĕре пур колхозниксем те активлăн хутшăнмаççĕ. Малтанхи кун вырма колхозниксен 89 проценчĕ çеç тухнă.

Çапла ĕнтĕ, ăçта ĕç дисциплини начар —унта колхоз ĕçĕсем юхăнса пыраççĕ. Çак чăнлăха халĕ, тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра уйрăмах асра тытас пулать. Колхозра хурçă пек çирĕп дисциплина тăвассишĕн куллен ĕçлесе пымалла.

П. ТИХОНОВ.

Тырă памалли графика районра 5 колхоз кăна тултарса пырать

КАНАШ, августăн 24-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районра тырпул пухса кĕртесси хĕрўллĕн пырать. «Красное пламя», «Канаш», «Мотор» тата Доронин ячĕпе тăракан колхозсем тырă вырмалли плана 60—70 процента яхăн тултарнă. Çак колхозсенче жнейкăсемпе, çурласемпе выраççĕ тата кĕрепллеллĕ çавасемпе çулаççĕ. Кунта тырă вырнă вăхăтрах кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕç те ăнăçлă пырать. Колхозниксем ирхине ирех ĕçе тухаççĕ те тĕттĕм пулсан тин ĕçрен кĕреççĕ. Кулленхи ĕç нормине пурте тенĕ пекех тултарса пыраççĕ. Доронин ячĕпе тăракан колхозра кашни колхозник нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлет. Машинист Филиппов юлташ, жнейкăпа вырса, кулленхи нормăна 120 процент тултарса пырать. «Красное пламя» колхозри машинист Никифоров юлташ кунне 5 гектар вырать. Кунта çавапа çулакансем те лайăх ĕçлеççĕ. Михайлов, Иванов колхозниксем кашни кунах 0,45—0,50-шер гектар çавапа çулаççĕ.

«Канаш», «Мотор», «Победа», «Красная Армия» тата Доронин ячĕпе тăракан колхозсем государствăна тырă памалли графика ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Анчах та районра çаксем пек лайăх ĕçлекен колхозсем питĕ сахал-ха, ытти колхозсем государствăна тырă памалли графика тултараймаççĕ.

«Идея Ленина» колхоз (председателĕ Козарев юлташ) ырашăн 25 процентне кăна вырнă, çуртыррисене вырма, государствăна тырă пама пачах тытăнман. Каганович ячĕпе тăракан колхозра та пĕтĕм вырса пухмалли лаптăкăн 35 процентне кăна вырнă.

Çак колхозсем районра юлса пыни чăн малтанах унта ĕç дисциплини ытла та япăххинчен килет. Ĕç тухăçлăхĕ ытла та начар, нумай колхозниксем ĕçе кая юлса тухаççĕ, хĕвел аниччене ĕçрен таврăнаççĕ. Тырă вырмалли машинăсемпе туллин усă курмаççĕ. Кунта кĕлтене капана хывса авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕç те юлса пырать.

Награда лайăххрах ĕçлеме хушать

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртун çур çулхи итогĕсене пăхса тухнă хыççăн СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Шăхасан районне Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан преми памалла тунине илтсенех, районри колхозсенче пухусем пулса иртрĕç. Ухманти «Победа» колхозра колхозниксен пухăвĕнче ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. Архипов юлташ выльăх-чĕрлĕх пăхаканесем умĕнче тăракан малашнехи задачăсем çинчен каласа пачĕ. Нумай колхозниксем сăмах тухса каларĕç. Ферма заведующийĕ Н. Лаврентьев юлташ пухура çапла каларĕ:

— Пирĕн района выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе çитĕнўсем тунăшăн Хĕрлĕ Ялав нани пире татах та лайăххрах ĕçлеме хушать. Пирĕн колхоз кăçал кашни ĕнерен пĕрер пăру, 96 сурăхран 116 путек, 25 сысна аминчен 190 çурă илсе ўстерчĕ. Ĕне сăвакан Ф. Григорьева 16 ĕнерен 16 пăру илсе сыхласа хăварчĕ, лайăх ĕçленĕшĕн вăл кăçал пăру илет. Колхоз 150 тонна силос хывнă, 18 центнер вĕлтрен, 15 центнер армути, 68 лав çулçăллă апатсем хатĕрленĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Шĕкĕрти «Новый путь» колхоз та пысăк çитĕнўсем тунă. Ферма витисене лайăх юсанă, выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхаççĕ. Кăçал çамрăк выльăхсем вилмен. Кашни сысна аминчен 10-шар çурă илнĕ, 52 сурăхран 72 путек, кашни сурăхран 1,9 килограмм çурхи çăм касса илнĕ. 15 кĕсререн 12 тиха илсе пăхса çитĕнтернĕ. «Маня» ĕне кунне 15—16 литр, «Чернушка» 11—12 литр сĕт параççĕ.

Куйбышев ячĕпе тăракан колхозăн старши конюхĕ Григорий Ильин 24 кĕсререн 19 тиха илнĕ, ăна ĕçшĕн 1,5 центнер тырă хушса тўлеççĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхозри Яраков конюх 15 кĕсререн 12 тиха илнĕ. Кў колхозра фермăсен заведующийĕ пулса Пигасов юлташ 9 çул ĕçлет. Ĕне сăвакансем Е. Дубина, Е. Васильева, В. Морозова фермăра 4—5 çул ĕçлеççĕ. Вĕсем кăçал 18 ĕнерен 18 пăру илсе ўстернĕ.

Районра ĕçшĕн хушса илекенсем пĕтĕмпе 207 çын шутланаççĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра сысна пăхакан Петрова юлташ 6 уйăх хушшинче кашни амаран 9-шар сысна çури илсе ўстернĕшĕн 2 сысна çури илнĕ. Тукайри Калинин ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан М. Краснова 2 путек, ферма заведующийĕ М. Иванов пĕр путек тата пĕр сысна çури илнĕ. Çавăн пекех сысна пăхакан Рубина юлташа та икĕ сысна çури панă.

1945 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 103 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 107 процент, сурăхсем енĕпе 140 процент, сыснасем енĕпе 130 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 101 процент тултарнă. Район ама выльăхсем ĕрчетес плана та тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕхрен ытларах продукци илесси чи пысăк ĕç. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе илсен, кашни ĕнерен 500 литр сĕт суса илнĕ. Кашни сурăхран 1,3 килограмм çăм касса илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх йышне тата вĕсен тухăçлăхне ўстересси выльăх апачĕ ытларах хатĕрленипчен килет. Çакна шута илсе районри колхозсем 4.630 тонна силос хывнă, 3.755 лав çулçăллă апат, армути, вĕлтĕрен нумай хатĕрленĕ. Районри колхозсем 2.658 гектар çинчи акнă курăксене тата 1.300 гектар улăх утине çулса капана хывнă. Купсăр пуçне, ферма участокĕсем çине 286 гектар тĕрлĕрен кăшмансемпе пахчаçимĕçсем тата курăксем акса хăварнă.

Районĕпе 122 вите юсанă, 16 вите çĕнĕрен тунă. «Первое Мая», «Активист», «Свобода» тата ытти колхозсем те выльăхсем усрамалли витесене тĕпренех юсаса аслăлатнă. Чкалов, Максим Горький ячĕсемпе тăракан колхозсенче çамрăк выльăхсем валли çĕнĕ витесем тунă.

Выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхнипе пĕрлех государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана вăхăтра тултарассишĕн те кĕрешмелле. Августăн 1-мĕшĕ тĕлне район çулталăкшăн аш-какай 81,4 процент, сĕт-çу—70 процент, çăмарта—60 процент, çăм—107,7 процент панă. «Новая жизнь», Чкалов, Куйбышев ячĕсемпе тăракан колхозсем государствăна 1945 çулшăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене чи малтан парса татнă, халĕ 1946 çулшăн параççĕ. Анчах Сителти «Победа», Ямашри «Ударник» тата Ильич, Сталин ячĕсемпе тăракан колхозсем сĕт-çу памалли обязательствăсене начар пурнăçласа пыраççĕ. Уйрăм колхозниксемпе единоличниксем хушшинче государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта парасси çителĕксĕр пырать. Ку тĕлĕшпе Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ Никитин юлташ та начар ĕçлет, хăйĕн ялти агенчĕсене кирлĕ пек ертсе пымасть.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне тытса тăрасси—калама çук чаплă чыс. Çавăнпа та Шăхасан районĕнчи колхозсен выльăх-чĕрлĕх йышне ўстерме тăрăшнипе пĕрлех, тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене государствăна памалли плана тултарассишĕн те тимлĕн ĕçлемелле.

С. ШАДИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем малтанхи енсенеллех малалла куçса пынă.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ çарĕсем Маньчжурин кăнтăр пайĕнче **ЛИННАНЬ** хулине йышăнса илнĕ.

ИНÇЕТ-ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-мĕш ФРОНТ çарĕсем **ГЕНЗАН** хулипе портне пырса кĕрсе унта тинĕс урлă пырса антарнă десантпа пĕрлешнĕ.

ИНÇЕТ-ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-мĕш ФРОНТ çарĕсем **САХАЛИН** утравĕн кăнтăр пайĕнче, Лăпкă океанри флотăн карапĕсемпе тата десант чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, **ОТМАЙ, ТОЙОХАРА** хулисене тата **ОТОМАРИ** хулипе портне йышăнса илнĕ.

Августăн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсене японецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 70.000 çын ытла тыткăна парăннă. Тыткăна парăннисем хушшинче 7 генерал, вăл шутра Квантунри 4-мĕш армин командующийĕ **УЭМУРА МИКИО** генерал-лейтенант пур.

Япони çарĕн парăнакан чаçĕсемпе соединенийĕсене йышăнас ĕç малалла пырать.

СОВИНФОРМБЮРО.

ХАЛĂХ ВАЛЛИ ПИР-АВĂР ТУСА КĂЛАРАССИ

Мускаври пир-авăр фабрикисем халăх валли пир-авăр туса кăларас ĕçе пуçăнаççĕ.

Дзержинский ячĕпе тăракан Трехгорнăй мануфактура фабрикинчи станоксем «Мая» тата «Спота» йышши лайăх пир-авăрăн пирвайхи вуншар пин метрне туса кăларнă.

Креп-де-шин, шифон тата ытти сортлă пир-авăрсене пурçăн тĕртекен «Красная Роза» ятлă фабрика тĕртсе кăларать. Фабрика лабораторийĕ çĕнĕ йышши пир-авăр хатĕрлет. Комбинат коллективĕ иккĕмĕш çур çул вĕçленнĕ тĕле планран иртерсе 286 пин метр пир-авăр туса кăларма обязательство илнĕ.

«Освобожденный труд» фабрика драп, мамăк тата çăм тутăрсем туса кăларассине ўстерет. Халĕ предприятире çĕнĕ станоксем, çăм тантаракан, сукно тĕртекен тата ытти машинăсем лартаççĕ. Ку ĕнтĕ пир-авăр туса кăларас ĕçе чылай ўстерме пулăшать. (ТАСС).

ÇĔЛЕНĔ ЯПАЛАСЕМ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРАÇÇĔ

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ РСФСР Наркомлегпромне 1945 çулхи иккĕмĕш çур çул хушшинче гражданла халăх валли çĕленĕ япаласем—пальтосем, костюмсем, платьесем, кĕпе-йĕм тата ытти те ытларах туса кăларма хушнă.

Çĕвĕ çĕлекен предприятисенче çĕнĕрен 38 механически конвейер, 1500 çĕвĕ машини хушса ĕçе яраççĕ. Ростов хулинче механически завод тума йышăннă. Унăн тĕп корпусĕ кăçал ĕçе каймалла.

Красноярск крайĕнче, Тутарпа Башкир республикисенче, Ленинград, Иркутск, Ростов, Челябинск, Куйбышев тата ытти облаçсенче те кăçал уйрăм çынсем валли çĕвĕ çĕлемелли 20 ателье уçăлмалла.

1945 çулта çĕвĕçсене массăллăн вĕрентсе хатĕрлеме 20 ФЗУ шкулĕ уçăлмалла. Уйрăмшарăн тата бригадăсенче вĕрентсе 1—2 çул хушшинче 3.000 çĕвĕç хатĕрлемелле. Çĕвĕ фабрикисенчи главнăй инженерсемпе технологсем пулма кăçал РСФСР Наркомлегпромĕн вĕренў комбинатĕнчен 200 çын вĕренсе тухмалла. (ТАСС).

БЕРЛИНРИ КОНФЕРЕНЦИЕ КĂТАРТАКАН ФИЛЬМ

Документлă фильмсем кăларакан тĕп студи союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен тата Великобританин — руководителĕсен Берлинри конференцие кăтартакан документлă пысăк фильм туса хатĕрленĕ. Çак питĕ чаплă фильма сталинла премии лауреачĕсем С. Герасимовпа И. Копалин режиссерсем ертсе пынипе тунă. Ăна августăн 24-мĕшĕнче Мускаври кинотеатрсенче кăтартма пуçланă.

Çав кинофильм виçĕ держава руководителĕсен Берлинри историллĕ конференцийĕн пур тапхăрĕсене те кăтартать.

Берлинри конференци çинчен калакан фильм — пирĕн саманари питĕ пысăк историллĕ ĕçе кăтартакан çав тери уçăмлă та витĕмлĕ кинодокумент пулса тăрать. (ТАСС).

КОМБАЙНПА КУННЕ 12 ГЕКТАР ТУЛĂ ВЫРАТЬ

Елчĕкри МТС комбайнерĕ П. Чернов хăйĕн ывăлĕпе А. Черновпа «Коммунар» комбайн çинче улăшса ĕçлет. Ыраш вырнă вăхăтра вĕсем «Трактор» колхозра авăн çапрĕç. Кашни кунах 16 гектар çинчи ыраша çапас вырăнне 20—22 гектар çапнă. Халĕ Чернов комбайнер комбайнпа тулă вырма тытăннă. План тăрăх вĕсен 148 гектар çурхи тырă вырмалла. Черновсем вара çак плана 200 процент тултарма обязательство илнĕ. Малтанхи кунах 8 гектар вырăнне 12 гектар тулă вырнă.

Тěнчери лару-тăру

Хěрлě Çар Япони агрессорне çěнтернě ятпа панă салют сассисем янраса иртрěç. Японин Квантунри çарě хирěç тăма чаранса хěçпăшала пăрахрě те тыткăна паранчě. Хěрлě Çарăн ялавěсем Мукденра, Харбинра, Цицикарта, Гиринра, Порт-Артурта, Дайренра тата Маньчжури столицинче Чанчуньре вěлкěшеççě. Япони паранчě. Çапла ентě, фашистла агрессорсене хирěç пыракан историллě кěрешěвен тепěр сыпăкě вěçленет.

Тěнчери мěнпур халăхсем Совет Союзě çине, унăн паттăр Хěрлě Çарě çине, хăйěн аслă вăйне империализмла Японие аркатса тăкас ěçе панăскер çине пăхса савăнаççě. Японие хирěç пыракан вăрçа Совет Союзě татăклăн хутшăнни ирсěр тăшмана аркатса тăкассине хăвăртлатнă тěп сăлтавсенчен пěри пулса тăрать. Çак тěрěс факта пур çěршывсенче те йышăнса палăртаççě. Империализмла Япони кăçалхи июлěн 26-мěшěнче союзниксем Потсдамран хăйне пěр сăмахсăр парăнма сěннине йышăнмарě. Анчах вăрçа Совет Союзě хутшăнсанах унăн парăнма тиврě.

Япони Пěрлешнě нацисен вăй-хăватне хирěç тăраймарě. Анчах та Япони империализмне тěп тăвас задача çакăнпах вěçленмест-ха. Фактсем çакна кăтартса параççě: Япони империализмěн пуçпулса тăракан ушкăнěсем захватчикла çěнě вăрçă пуçласа ямашкăн вăй сыхласа хăварас тесе пур майсемпе те тăрăшаççě.

Токиори радио «Япони парăнни вăхăтлăх япала пулса тăрать», тесе калани тěрěссипе малашнехи кěрешӳсем валли вăй-хăват сыхласа хăварма чěннине пěлтерет. Японири нумай хаçатсемпе политика деятелěсем хăйсен статьисемпе сăмахěсенче Япони хăçан та пулин çиеле тухас шухăша пěлтерсе калаççě. Японири хаçатсем çапла çирěплетсе çыраççě: Япони çар тěлěшěнчен вăйсăр пулнă пирки парăнмарě, вăл «халăха ырлăх тăвас тесе парăнчě». Хаçатсенче «парăнас» сăмаха та çырмаççě, ун вырăнне «император ирěкне пурнăçа кěртни», «ирěксěр йышăнма тивнě решени» тата ытти тěрлě сăмахсемпе усă кураççě.

Япони пěр сăмахсăр парăнасси çинчен каласа панă хыççăн тунă çěнě правительство составě те Японире пуçпулса тăракан çар çыннисем малалла кěрешес шухăша пăрахманнине кăтартса парать. Ют çěршыв обозревателěсем палăртнă тăрăх, Японин хальхи правительствин составне вăрçăн пысăк преступникěсем, колонизаторсем тата Япони çарěнче пуçпулса тăракан çынсем кěреççě.

Тěрлě çěршывсенче тухакан хаçатсенче Японин фашистла агрессорěсен ултавла шухăшěсене тăрă шыв çине кăларса çав маневрсем мěн тери хăрушă пулса тăнине хыттăн асăрхаттараççě. Американецсен «Адвертайзер» хаçачě çапла çырать: Японире пуçпулса тăракан çынсен хальхи вăхăтри ěçěсемпе пропаганди «Япони халăхне мир вăл—японецсем пěтěм тěнчере пуçпулса тăрассишěн кěрешнě вăхăтри вăхăтлăх канăç çеç пулса тăнине ěнентермелли» меслет пулать.

«Нью-Йорк пост» хаçат çапла асăрхаттарать: «Японин çарне аркатса тăкни кăна çитеймест. Агрессиллě шухăш-кăмăл вăл политика деятелěсем хушшинче пуçланса каять. Çавăнпа пирěн чăп-чăн оккупаци политикине тытса пымалла, милитаристсенчен влаçа туртса илмелле, вěсене хăйсен самурайла хěçпăшалне пăрахтармалла, фашистла системăна пěтерсе лартмалла, хальхи перемирирен çирěп мир туса хумалла».

* * *

Болгари историллě паллă событисене ирттерме хатěрленет: унта халě чăн-чăн демократиллě суйлавсем пулса иртмелле. Халăхăн сарлака массисем çěршыври аслă органа—халăх пухăвěн депутачěсене суйлас ěçе активлăн хутшăнма хатěрленеççě. Паллă ěнтě, фашистла режим вăхăтěнче пулнă халăх пухăвěн составне Борис патша хăй суйласа лартнă, унта патшана çывăх тăракан фашистсемпе нимěç агенчěсем кěнě.

Болгарири суйлав законě, кăçалхи июнь уйăхěн пуçламăшěнче правительство çирěплетнěскер, чăннипех демократиллě суйлав законě пулса тăрать: ку закон тăрăх, 19 çула çитнě кашни çыннăн (тěрмере лараканнисемпе граждан прависене çухатнисемсěр пуçне) суйлав прави пур. Болгари историйěнче хěрарăмсем, çамрăксем, çар çыннисем пěррěмěш хут суйлава хутшăнаççě. Кашни çын, вăл мěнле тěне ěненнине тата мěнле наци çыннине пăхмасăр, суйлама та суйланма та пултарать.

Çакăн пек демократиллě суйлав законне Болгарире нихăçан та курман. Çěршывра суйлав умěнхи хěрӳллě кěрешӳ пуçланса кайнă. Отечественнăй фронта кěрекен политикăллă тăватă парти суйлама пуринчен ытларах кандидатсем тăратнă. Çав партисен суйлавра кандидатсен пěр списокě тата пěр платформа пулать. Вăл партисем çаксем: «Болгарири çěр ěçěнчи çынсен халăх союзě»—БЗНС, рабочисен коммунистла партийě, «Звено» организацийě, социал-демократсен партийě.

Оппозици те тěрлě суйлав коллегийěсенче хăйсен кандидачěсене тăратнă.

Болгарири анлă общественность—хаçат-журналсем, политикăллă партисемпе профсоюзсем çěнě суйлав законне хаваслăн йышăнчěç. Çак закон кашни çынна хăйěн шухăшне ирěккěн каласа пама тата Отечественнăй фронтăн демократиллě суйлав платформине пурнăçа кěртсе пыма май парать.

Шăпах çакăн пирки ěнтě çěршывра суйлав кампанийě хěрӳллěн иртет.

Анчах та çěршывра демократи вăйлăн аталанса пыни тата Отечественнăй фронт ăнăçлă ěçсем туни Болгарири реакци юлашкийěсен кăмăлне каймасть. Вěсем Отечественнăй фронт правительстви тавра пěтěçнě халăхăн пěрлěхне пăсма тата демократиллě суйлавсене ирттерессине кансěрлеме пур майсемпе те тăрăшаççě. Ирěклě суйлавсенче халăх пухăвěн составне кěмесěр юлма пултарнине туйса БЗНС-ăн сылтăмри элеменчěсем («гематовецсем») тата социал-демократсен партийěн сылтăмри элеменчěсем Отечественнăй фронт правительствине хирěç питě хаяр кампани пуçласа ячěç.

* * *

Грецири республиканецсен хаçачěсенче Грецири монархистла-фашистла элементсем халăхăн суйлав правине ултавлăн пăсса çěршывра хăйсен позицине çирěплетсе хăварма хăтланни çинчен çыраççě.

Паллă ěнтě, Грецири республиканецсем тата демократсен партийěсемпе организацийěсем çěршывра террора пěтерсе лартма тата представительсен правительствине тума требовани кăларса тăратнă. Анчах та кăçалхи августăн 11-мěшěнче Вулгарис тунă çěнě правительство террористсене чарма шутламасть. Грексен «Элефтерия» хаçачě çапла çырать: «Пур сутăнчăксем те, охраннăй батальонсенче пулнă çынсем, уйрăм охранкăри палачсем тата вěсене евěр ытти çынсем халě чи сылтăмри лагере пěрлешрěç. Çав лагерь ěнтě «çěнě» правительствăн пěртен-пěр таянчăкě пулса тăрать».

Вулгарис короле Грецие таврăс ыйту тěлěшěпе кăçалах плебисцит пулса иртмелле тесе пěлтерчě. Грецири демократиллě пур партисемпе организацисем те çак «плебисцита» бойкот паратпăр тесе каласа пачěç.

А. ШАТИЛОВ.

СĚНТĚРВĂРРИНЧИ АРТЕЛЬСЕНЧЕ

Сěнтěрвăрринчи предприятисемпе промартельсем аслă Çěнтерӳ ячěпе пыракан социализмлă ăмăртура илнě обязательствăсене пурнăçласа пыраççě. «Портной» артель иртнě уйăхра таварсем туса кăлармалли плана 110 процент тултарнă. Уйрăмах А. Степановăпа Н. Сорокина бригадисем тухăçлă ěçлеççě. Вěсем задание икě хута яхăн ирттерсе пурнăçланă.

Социализмлă ăмăртура райпромкомбинат коллективě те хăйěн ěçне лайăхлатрě. Промкомбинат çурçулти плана ăнăçлăн тултарчě.

«Парижская Коммуна» артельре ěçлекенсем, ăмăртăва хутшăнса, планпа пăхнинчен 10 процент ытларах тавар туса кăларма тата çулталăкри плана Сталинла Конституци Кунě тěлне тултарма обязательство илнě. Халě кунти алăстаçсем çав обязательствăсене пурнăçа кěртессишěн вăйлă хурса ěçлеççě.

Сěнтěрвăрринчи вăрман хуçалăхě, промышленноçра кирлě чěртавара — çӳçе хуппине — 3105 килограмм хатěрлесе парса, çак ěçěн заданине тултарчě. П. Михайлов ертсе пыракан лесничество 1600 килограмм çӳçе хуппи пухса панă.

С. СЕЛЕЗНЕВ,
Ф. ИЛЬИН.

МАЛТА ПЫРАКАН ЦЕХРА

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялěнчи «Труд» промысла артелě заданисене кварталтан квартала ытлашшипе тултарса ěçлет. Уйрăм цехсем ěçре татах та паха тěслěхсем кăтартаççě. Римма Николаева ертсе пыракан цех III-мěш квартал планне 187 процент тултарчě, продукци пахалăхě те чылай ӳснě. Кунта цех коллективě лайăх ěçлени, чăн малтанах ěçе кирлě пек йěркелесе янинчен килет. Кашни рабочи вăхăтпа туллин усă курса, материалсене перекетлесе, ытларах продукци туса кăларассишěн тăрăшать. Çавна пула кěпе-йěм çěлекен цехра двухсотниксен хисепě нумай ӳсрě. Уйрăмăнах Галина Торина, София Романова тата Надежда Тарасова юлташсем заказсене вăхăтра та лайăх туса параççě, кулленхи ěç нормине 200—230 процент тултараççě.

— Вăхăта пěр минут та усăсăр çухатмаççě, ěçе чěререн юратаççě,—тет вěсем çинчен цех бригадирě Римма Николаева юлташ. Ольга Еремеева, Мария Поликарпова работницăсем 10—12 сехет хушши цехран тухмасăр ěçлеççě, канмалли кунсенче те васкавлăн тумалли заказсене тăваççě. Çапла ěçлени промартель коллективне заданисене срокчен тултарма тата продукци хакне нумай йӳнетме май пачě.

Кунта алăстаçсем хушшинчи политикăллă-массăллă ěçе лайăх йěркеленě. Рабочисене яланах хаçат-журналсем вуласа параççě, тěнчери лару-тăрупа, Совет Союзěнчи çěнě хыпарсемпе паллаштараççě. Агитациллě-массăллă ěçе парти членě Варвара Чубакова юлташ ертсе пырать. Час-часах вăл производствăллă канашусем, дисциплинăна пăсакан рабочисемпе уйрăм калаçусем туса ирттерет. Цехри дисциплинăна тишкерсе асăрхаса тăни ěç тухăçлăхне ӳстерме нумай пулăшрě.

Цех коллективě малта пыракан рабочисен паха опытне рабочисем хушшинче сарас тěлěшпе те чылай ěçсем тунă. Артель председателě Иван Мокеев, час-часах цехсене çӳресе, ěçри çитменлěхсене асăрхаса, вěсене пěтерме пулăшса пырать.

Н. АНДРЕЕВ.

Австрири оккупациллě çарсен тăватă главнокомандующийě пěр-пěринпе тěл пулса калаçни

ВЕНА, августăн 24-мěшě. (ТАСС). Австрири оккупациллě çарсен главнокомандующийěсем августăн 23-мěшěнче пěр-пěринпе тěл пулни çинчен калакан пěлтерěве пичетлетпěр:

«Конев Маршал чěннипе паян Вена хулинче Австрири оккупациллě çарсен тăватă главнокомандующийě — Конев маршал (СССР), М. Кларк генерал (США), Макрири генерал (Великобритани) тата Детуар генерал (Франци)—пěр-пěринпе тěл пулнă.

Канашлура Конев маршал председатель пулнă.

Кашни главнокомандующипе пěрле унăн политикăллă советникě тата командующи заместителě пынă.

Тăватă главнокомандующи халě татса памалли темиçе ыйтăва пăхса тухнă та халех пуçламалли ěçсем пирки калаçса татăлнă. Уйрăммăн илсе кăтартсан, вěсем Вена халăхне апат-çимěç парса тăрас ěçе малашне мěнле организацилемелли çинчен сӳтсе явнă. Вěсем совет влаçěсем халиччен хула валли апат-çимěç парса тăнине палăртнă тата çапла калаçса татăлнă: татăклă решенисем йышăниччен оккупацилекен тăватă державăран кашнийě хула валли апат-çимěç парса тăмалла, çав апат-çимěçе кашни зонăри халăхăн хисепě тăрăх пропорциллě парса тăмалла. Çапла туни Вена хулине апат-çимěç парса тăрас ěçе часах лайăхлатма пулăшě, тенě.

Австрири тăватă оккупаци зони хушшинчи экономикăллă тата ытти чикěсене пěтерес ыйтăва та малтанлăха пăхса тухнă.

Главнокомандующисен тăватă заместительне çав калаçса татăлнă ěçсене пурнăçа кěртес тěлěшпе тěплě плансем туса хатěрлеме хушнă.

ВЕНА, августăн 23-мěшě. 1945 çул».

ИСПАНИН ЭМИГРАЦИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВ ИНЕ ТĂВАССИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, августăн 21-мěшě. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчě Мексико хулинчен пěлтернě тăрăх, Испани премьер-министрě пулса ěçленě Негрин халь президент ěçне туса тăракан Мартинес Барриопа калаçнă, вăл унпа Испанин эмиграцири правительствине тăвасси çинчен калаçнă. Вăл коалициллě правительство тума сěннě, çав правительствăра пур партисен представителěсем те пулмалла, тенě.

Негрин «законлă правительствăна йышăнтарса ăна часрах Испание тавăрмашкăн» пěтěм вăйпа тăрăшма сěннě. Негрин çапла каланă: çав правительствăна мěнпур партисен (чи сылтăмрисенчен пуçласа чи сулахайрисене çитиччен), политикăллă мěнпур ушкăнсен тата рабочи организацийěсен представителěсем кěмелле, унта политика тěлěшпе ěçлекен паллă деятельсемпе ытти çынсем те кěмелле, вěсем кěни çав правительствăна наци правительстви евěрлě туса хурě. Çав правительствăн политики ырă кăмăллă та çав тери çирěп политика пулмалла. Çак çирěплěх республикăра йěрке туса хума тата конституцие хӳтěлеме пулăшмалла. Вăйлă правительство кăна халăха пěрлештерме пултарать.

Республиканецсен лидерěсем шутланă тăрăх, эмиграцири çěнě правительствăна Мексика пуринчен малтан йышăнě.

Хăйěн нумаях пулмасть каланă сăмахěнче Негрин Касадо генералпа унăн юлташěсене çěнě правительствăна кěртессине хирěç каланă. Негрин Касадопа çапла каласа айăпланă: вăл акăлчансемпе французсен агенчě пек пулса ěçлерě, çав агентсем вара 1939 çулта республикăпа пěтерсе лартма пулăшрěç, тенě.

ИСПАНИН ЭМИГРАЦИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĚ ПУЛМА ЛАРТНИ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 22-мěшě. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчě Мексико хулинчен пěлтернě тăрăх, Испани республики президенчěн ěçěсене туса тăракан Мартинес Баррио Испани правительствин премьер-министрě пулма Хосе Хираля лартнă, ăна Испанин эмиграцири правительствине туса хума хушнă. Хираля премьер-министр пулма лартнине кортес (Испани парламенчě) çирěплетмелле.

Корреспондент каланă тăрăх, кортесăн тепěр сессийě Мексико хулине Европăран тата Кăнтăр Америкăран депутатсем пырса çитсен пулса иртет. Дипломати ěçěнче ěçлекен çынсем çапла шутлаççě: Латинла Америкăри хăшпěр республикăсем Франкопа çыхăну тытма часах пăрахаççě пуль, теççě.

Хираль сулахайри республиканецсен партийěн деятелě пулса тăрать. Вăл ěлěкрех премьер-министр пулса ěçленě.

ЛАТИНЛА АМЕРИКĂРА ФРАНКО ИСПАНИЙĚПЕ ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПĂРАХМА ЫЙТАÇÇĚ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 23-мěшě. (ТАСС). «ПМ» хаçат пěлтернě тăрăх, Латинла Америкăри ěçсыннисен конфедерацийěн председателě Ломбардо Толедано Латинла Америкăри мěнпур организацисене, çав конфедерацие çыхăнса тăракансене, çапла чěнсе каланă: Америкăри мěнпур республикăсене халех Франко Испанийěпе çыхăну тытма пăрахтарассишěн кампани пуçламалла, тенě. Америкăри Испани ирěклěхěшěн кěрешме тунă комитетăн председателě Хартман епископ та Трумэн патне янă çырура Франкопа çыхăну тытма пăрахма чěннě. Моряксен союзě тата ытти профсоюз организацийěсем те çавăн пекех тума ыйтаççě.

РУМЫНИН НАЦИ ПРАÇНИКНЕ БУХАРЕСТРА УЯВЛАНИ

БУХАРЕСТ, августăн 23-мěшě. (ТАСС). Паян Румыни столици румын халăхěн наци праçникне—Антонеску режимне сирпěтерни çулталăк çитнине — уявласа ирттернě.

Ирхине соборта кěлтунă. Унта Румыни правительствин членěсем тата чěннě çынсем нумай пулнă. Ирхине 10 сехетре парад пуçланнă. Парадра пур йышши хěçпăшаллă çарсем те пулнă. Парад виçě сехет пынă. Унтан парад пулнă площадь урлă правительство трибуни умěпе ěçсыннисен делегацийěсем пěр сехет хушши иртсе пынă.

Парадра пулнă çарсем каймалли урамсенче 5 километр тăршшěнче Бухарест хулинчи çынсем ретěн тăрса тухнă. Вěсем çарсене хěрӳллěн саламланă.

ИРАНРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ТЕГЕРАН, августăн 20-мěшě. (ТАСС). «Рахбар» хаçат пěлтернě тăрăх, Иран çарěн генеральнăй штабěн начальникě Арфа генерал демократиллě шухăш-кăмăллă офицерсене Иранăн кăнтăр пайне кăларса ярать. Çапла, Рахмани капитана тата Агатис Тегеранран Керман хулине кăларса яраççě.

ТЕГЕРАН, августăн 20-мěшě. (ТАСС). Тегеранри хаçатсем çапла пěлтереççě: правительствăн Иран Азербайджанěнчи ěçсене йěрлесе тухма уйăрнă комиссийě Тавриза тухса кайнă. Çав комиссире Хосров Пенах генерал, Джаханбани генерал тата Тавризра губернатор пулса ěçленě Ахмеди пур.

АНГЛИ ПАРЛАМЕНЧĚ ПĚРЛЕШНĚ НАЦИСЕН УСТАВНЕ ЫРЛАНĂ

ЛОНДОН, августăн 23-мěшě. (ТАСС). Августăн 23-мěшěнче каçхине Англири общинăсен палати Пěрлешнě нацисен уставне ырланă. Унччен устава лордсен палати ырланă.

Квислинга суд туни

ОСЛО, августăн 23-мěшě. (ТАСС). Судăн тăваттăмěш кунěнче Квислингран малалла ыйтнă. Суд аллине Квислинг нимěç агенчě пулнине уççăн кăтартакан çěнě документсем кěреççě. Суд председателě Квислингран çапла ыйтать: «Аслă Германи сообществи» тесе эсир мěне калатăр?» тет. Ку ыйтăва суд председателě ахальтен паман: Квислингăн кивě документчěсемпе планěсенче çав термин час-часах тěл пулать. Квислинг çурçěрти мěнпур çěршывсене, çав шутра Швецие Финляндие те, хăйне пăхăнтарса, çав çěршывсенче «фюрер» пулма ěмěтленнě тата «çурçěрти çěршывсен çав союзне» Гитлера пăхăнтарма шутланă. Квислинг пăркаланать, анчах та усăмлă ответ параймасть.

Нимěçсем оккупациленěренех Квислинг партийě «Фритт фольк» хаçата аслăлатма нимěçсенчен 208 пин Германи марки чухлě укçа илнě. Квислинг çакна тунма хăтланать. Ăна укçа документне кăтартсан, вăл—эпě хамăн партин финанс ěçěсене тěкěнмен, тесе хурать.

Малалла суд Квислинг Норвегие мěнле «тытса тăнипе» пăхма пуçлать. Квислинг хăйěн «правительстви» Гитлерăн рейхскомиссарěпе Тербовенпа малтан калаçса татăлмасăр пěр решени те йышăнманнине тунмасть. Ку çеç те мар, Тербовен Квислинг «правительствине» кирлě решенисем йышăнма хăй хушса тăнă.

Прокурор Норвеги патриочěсене арестлени çинчен, вěсене асаплантарни, мăшкăллани çинчен ыйтсан, Квислинг çапла ответлет: «Эпě ун çинчен пěлмен», тет. Залри çынсене култарса, çапла кăшкăрса калать: «Эпě ун çинчен пěлнě пулсан, Гитлера жалоба панă пулăттăм!» тет.

1940 çулхи декабрěн 6-мěшěнче Квислинг хăйěн ятарласа çырнă çырăвěнче нимěçсенчен Норвегири квислинговецсене нимěç çарне кайма ирěк пама ыйтнă. Германи Совет Союзне тапăнсан, Квислинг Хěвелтухăçěнчи фронта норвежецсене ытларах яма пěтěм вăйпа тăрăшнă. Совет Союзěпе вăрçма фронта ямашкăн норвежецсене çара мобилизацилеме хатěрленнě, анчах та Норвеги халăхě хастаррăн хирěç тăни Квислингăн çак шухăшне пурнăçа кěртме паман.

Квислинг король двореçěн, учрежденисен тата уйрăм çынсен пурлăхěсене çаратнине палăртнă хыççăн, çавăн пекех тата профсоюз работникне Ханстеена персе вěлернине пăхса тухнă хыççăн (Квислинг нимěçсене çав çынна «пăрса яма» сěннě пулнă) суд свидетельсенчен ыйтма пуçлать.

Августăн 23-мěшěнче хаçатсем суд медицини экспертизин официальнăй пěлтерěвне пичетлесе кăларнă, унта çапла каланă: «Квислинга ăс-тăнпа психика енчен чирлě тесе шутлама сăлтав çук», тенě.

Фельетон

Тмин Хапанч Селедкин

Тмин Хапанч Селедкина хулара пурте пěлеççě. Çавăнпа унăн сăн-сăпатне ӳкерсе пама питě çăмăл пек туйăнать. Анчах сăнлама тытăнсан, çак ěç ытлашши çăмăлах та маррине куратăн. Чăн малтанах, хулара ăна куç хыçěнче пурте чи усал сăмахсем каласа вăрçаççě:

—Тмин Хапанч-и? У-у, вăл,—шуйттан кěвенти! Взяточник! Хапсăнчăк! Тăранма пěлмен пыр! Çынсене кăнтăр кунěнчех çаратать. Ну, асамçă тепěр тесен, кăсъеран хăвăн ирěкӳпех ывçăпа укçа кăлартарса хăйне пахтарать.

Анчах куç умěнче унпала пурте йăпăлтатма пăхаççě.

— Тмин Хапанч, час пулě-ши? Тмин Хапанч! О-о, сана шанатпăр! Эс лайăх çěлесе памасан, кам çěлесе патăр вара!

Тмин Хапанч «Верти-Крути» артелěн заведующийě, çакăнпа пěрлех вăл—производство заведующийě, тěп мастер, тěп закройщик пулса ěçлет. Урăхла каласан, универсал!

Çак «универсалăн» тата тепěр енне те палăртса хăвармалла. Тмин Хапанч—пěр вăхăтрах пур мастерскойра та, пур артельте те пулма ěлкěрекен çын.

Тмин Хапанчăн пěр юратнă сăмахě пур. Çынпа калаçнă хушăра вăл ăна çемçен кăна кěртсе хурать:

— Эпир взятка илместпěр, парнене хирěçлеместпěр. Взяткă мар, парне, парне, ăнланатăн-и? Парне парасси халь пархатарлă йăла.

Сăмах мар, резина! Тăсăлать — татăлмасть.

Вулакан кунта Тмин Хапанч пирки эпě ытлашши нумай чарăнса тăнă тесе калама пултарать. Чарăнса тăмах лекет. Мěншěн тесен, манăн юлташсенчен хăшěсем, Тмин Хапанч çинче «ытлашши чарăнса тăмасăр», ăна ним вырăнне хумасăр, хăш чухне тата ун умěнчен йěрěнсе иртсе кайма тăнă та, хăйсемех «шар курса» ларнă. Урăхла каласан, вěсем Наркомместпромăн «Индпошив» мастерскойне государство хакěпе костюмсем çěлетме заказ панă.

Анчах Тмин Хапанч тӳсме пултарать-и-ха куйи пек «йěркесěрлěхе»? Çук, вăл хăйне мăшкăл тăвакан çынна нихăçан та каçарма пултараймасть.

Государство хакěпе костюм çěлетме заказ панă çынна чи малтан пěр виç-тăватă уйăх е унтан та ытларах кěттереççě, çěлесе парсан та... Акă, С. юлташа çěлесе панă. «Бостон» ятлă материал! Пиншакăн хăрах борчě хулпуççи урлă хыçалалла пăхать, тепри вара кăвакал тытакан йыт хăлхи пек аялалла усăнса тăрать. Брюкин хăрах пěççи—Атăл леш еннелле пăрăнăç, тепри вара—Кайбулка еннелле. Г. юлташа тата коверкотран çěлесе панă. Унăн хăрах хулпуççи, лаша таканнě пек хытăскер, костюм хуçин чăн-чăн хулпуççийěнчен пěр шит аякалла тухса тăрать, тепěр хулпуççийě вара—шалалла, мăй патне тенě пекех, пырса ларнă.

Хисеплес пулать Тмин Хапанча!

П. Н. юлташ тěрěс тунă. Вăл хăйěн çур уйăх пайěкне (пěр çыхă колбаса, пěр литр хěвелçаврăнăш çăвě) илнě те костюмлăх отрезпа пěрле тӳрех Тмин Хапанча кайса панă.

— Взяткă мар, парне!

Тепěр виçě кунтан пăхатăп, П. Н. юлташа паллаймастăп та. Ун çийěнче гимнастеркăпа бриджи шăратса кăларнă пек вырнаçса лараççě.

Çапла юлташсем, Тмин Хапанч Наркомместпромăн чи чаплă мастерě!

Унта кăна та мар... Тмин Хапанч пур çěрте те ěлкěрет. Вăл, тěрěссипе, «Верти-Крути» артелěн мастерě.

Симěс пасарта Военторг мастерскойě пур. Манăн А. юлташ хăйěн лайăх сукмане пăсас мар тесе, «Верти-Крути» текен йěркене лайăх пěлсе тăрса тата Тмин Хапанча кӳрентерес мар тесе, пынă та тӳрех çав «универсаллă ăстаçăна» кительне брюки çěлетме заказ панă. Результатсем? Шикарнă!

Анчах укçине тӳлесе хатěр япалана илме пынă вăхăтра мастерскойра Военторг начальникě Елисеев пулнă пирки манăн А. юлташ малтанлăха аптăраса тăчě. Кунта ăна татах Тмин Хапанч хăтарчě. Вěсен мастерскойěнче костюмсем виçмелли тěттěм кěтес пур. Виçнě вăхăтра унта виççěмěш çын кěни ытлашши. Тмин Хапанч çав пӳлěмре ман юлташа кительне брюкине чěркесе пачě те, 800 тенкě алла шăнкăрт укçа илсе, нумай тăхăнса çӳреме ырă сунчě. Çав вăхăтра мастерскойра Елисеев йěркесěрлěхсене питленě сасă илтěнсе тăчě.

Военторг картишěнчех атă-пушмак çěлекен мастерской пур. Кунта манăн тепěр юлташ туфли çěлетме ордер илсе пынă.

— Путушě пулсан халех çěлесе пулăттăмăр, анчах сăранě çук,—тенě ăна пуçлăх.

Юлташ тавлашкаланă та каялла тухнă. Хапха патěнче ăна хыçран пěр çын хăваласа çитсе çемçе аллипе чавса кукринчен тытнă. Юлташ çаврăнса пăхнă та Тмин Хапанча палласа илнě. Лешě юлташа куç хěснě:

— Ку заказпа хěрарăм туфли çěлетпěр. Пěлетěр, халě хěрарăм атă-пушмакě хаклăрах, сутатăр та хăвăра валли пасарта илетěр.

— О, хăватлă Тмин Хапанч!—тенě юлташ ăна хирěç.—О, вездесущий!

Лешě çемçен лěхлеттерсе кулса янă.

— Я человек невинный, подайте мне водочки тминной,—тенě вăл юлташа лăплантарса.

Ман юлташ вара çакна ăнланса илнě: Тмин Хапанч Селедкин системăна кěнě явлени иккен! Вăл хăшпěр пуçлăхсенчен те çӳлерех тăрать!

Афанасий ЙĔП.

ФРАНЦИРИ ХАÇАТСЕН ПРЕДСТАВИТЕЛĚСЕМ ПРОТЕСТЛЕНИ

ПАРИЖ, августăн 22-мěшě. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пěлтернě тăрăх, Францири хаçат-журналсен представителěсен пухăвě пěр шухăшлă пулса, çакăн пек резолюци йышăннă:

«Тăшмана хирěç кěрешнě ушкăнсен хаçачěсем пěр çул каялла хальхи çуртсене туртса илчěç, çав çуртсем 4 çул хушшинче сутăнчăкла хаçат-журналсен аллинче тăнă. Тăшмана хирěç кěрешнě ушкăнсен хаçачěсем ирěке тухнă хаçатсене, халăхшăн ырă кăмăлпа тăрăшса ěçленěскерсене, ура çине тăратма тăрăшрěç. Анчах, общественность хěрӳллěн пулăшса тăрать пулин те, çав хаçат-журналсем паян хăрушлăхра тăраççě. Франципе ирěке кăларни çулталăк иртсен те, хăйсен ятне варалана хаçатсен пурлăхне туртса илмен-ха, тăшмана хирěç кěрешнě ушкăнсен хаçат-журналěсем Францири хут фабрикисем туса кăларакан пěтěм хута илсе тăмаççě-ха; хаçатсем кăларма правительство влаçěсем çеç ирěк парас йěркене, çак киревсěр йěркене халě те пěтермен-ха; сутăнчăкла хаçат-журналсем туса тăнă вăхăтри кивě законсене пурне те пăрахăçа кăларман-ха.

Францири хаçат-журналсем, тăшмана хирěç кěрешнě вăхăтра çуралнăскерсем, çулталăк каялла çěнтерсе илнине сыхласа хăварма тăрăшаççě. Вěсем француз халăхне хăйсене çак ěçсене тума пулăшма чěнеççě: хаçатсене тăшман аллинчех хăварнă çынсене сивлеме, хăйсен ятне варалана хаçатсен пурлăхне часрах тата пěтěмпех туртса илме, Францин хут промышленноçне ура çине тăратма, нимěçсен хут запасěсемпе халех усă курма пуçлама, хаçатсем кăларма ирěк парас киревсěр йěркене пěтерсе лартма. Францири хаçат-журналсене экономикăпа политика тěлěшěнчен никама та пăхăнмалла мар тума пулăшма чěнеççě».

ЭРРИО—РАДИКАЛ-СОЦИАЛИСТСЕН ПАРТИЙĚН ПРЕДСЕДАТЕЛĚ

ПАРИЖ, августăн 24-мěшě. (ТАСС). Августăн 23-мěшěнче радикал-социалистсен партийěн съезчěн юлашки ларăвě пулса иртнě. Ларура съезд радикал-социалистсен партийěн председателě пулма Эррионă суйланă.

ЛАВАЛЕ ДОПРОС ТУНИ

ПАРИЖ, августăн 24-мěшě. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пěлтерет: августăн 22-мěшěнче суд следователě Буайо Френ тěрминче Лавальтен Францири «Ашед» фирмипе çыхăну тытни çинчен ыйтса тěпченě. Виши «правительствин» пуçлăхě пулса ěçленě Лаваль çапла каланă: эпě «Ашед» фирмин директорěпе Ран ятлă нимěçе пěрле çыхăнтарса тăнă, çав нимěçěн Францири хаçат-журналсене контроллесе тăмалла пулнă, тенě. Лаваль тата çапла каланă: эпě çав фирмăн акцийěсен 51 процентне илтěм, ытти 49 процентне Рана илме сěнтěм, тенě.

КĚСКЕН

▲ Прага хулинче политика ěçěсем пирки Гитлерăн концентрациллě лагерěсенче ларнă çынсен митингě пулса иртнě. Политзаключеннăйсем пулнă çынсен союзěн председателě сěннипе митинга пухăннисем, фашизма хирěç кěрешсе вилнě çынсене асăнса, пěр минут хушши шăпланса тăнă. Унтан митинг ячěпе Чехословаки республикин президенчě Э. Бенеш доктор патне янă салама вуласа панă.

ÇĚНĚ УЧЕБНИКСЕМ

Чăвашсен Государство Издательстви çěнě вěренӳ çулě валли чăвашла çакăн пек учебниксем кăларчě:

1. С. С. Ягунов — ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ГРАММАТИКИ, 1-мěш пайě. Пуçламăш шкулти пěррěмěш класра вěренекен ачасем валли. Тиражě 15.000 экз., хакě 40 пус.
2. Н. С. Попова—АРИФМЕТИКА ЗАДАЧИСЕМПЕ УПРАЖНЕНИСЕН КĔНЕКИ, II-мěш пайě. Пуçламăш шкулта иккěмěш класра вěренекен ачасем валли. Тиражě 30.000 экз., хакě 60 пус.
3. Б. В. Всесвятский—БОТАНИКА. Вăтам шкулăн 5—6-мěш класěсенче вěренекен ачасем валли. Тиражě 15.000 экз., хакě 1 тенкě те 55 пус.
4. А. П. Киселев—ГЕОМЕТРИ, I-мěш пайě. Вăтам шкулăн 6—9-мěш класěсенче вěренекен ачасем валли. Тиражě 15.000 экз., хакě 2 тенкě.

Ответлă редактор заместителě Н. С. СТЕПАНОВ.

ЧĂВАШСЕН ПЕДАГОГИКА ИНСТИТУЧĚПЕ УЧИТЕЛЬ ИНСТИТУЧĚ истори, чěлхепе литература, физикăпа математика тата естествознанипе географи факультечěсен 1-мěш курсне тата аслăрах курсěсене илме çырнă заявленисене халь те йышăнаççě.

Педагогика институтне çитěнсе çитнине кăтартакан аттестат илнисене, Учитель институтне вăтам шкулăн 10-мěш класěнчен вěренсе тухнине кăтартакан свидетельство илнисене йышăнаççě.

Вěренме кěмелли экзаменсем Шупашкарта августăн 27-мěшěпе сентябрěн 15-мěшě хушшинче пулса иртеççě.

Çак адреспа ыйтса пěлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла-Маркса, 34, Пединститут, в Приемную комиссию.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителěн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайěн—2-89, парти пурнăç пайěн—3-99, промышленность пайěн — 3-97, ялхуçалăх пайěн—3-99, рабселькорсен пайěн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00226 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59 42 п. л.